# М. Ю. ЛЕРМОНТОВ



# М. Ю. ЛЕРМОНТОВ



# АШИК-КЕРИБ

*Турккӑсен халапӗ*



ЧӐВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1952



Тахҫан ӗлӗкех Тифлис хулинче пӗр пуян турккă пуранна. Нумай ылтăн панă ăна Аллах; анчах ылтăнран та хакли унăн пӗртен-пӗр хӗрӗ Магуль-Мегери пулнă. Пит хитре тӳпери ҫăлтăрсем, анчах ҫăлтăрсенчен лере ангелсем пуранаҫҫӗ, вӗсем тата хитререх, ҫавăн пекех Магуль-Мегери те Тифлис хулинчи хӗрсенчен чи хитри пулнă. Тифлисра тата чухăн Ашик-Кериб пуранна. Пророк ăна ырă чунӗпе юрă хастарӗсӗр пуҫне урăх нимӗн те паман; саазне (балалайкине) каласа, Туркестанăн авалхи паттăрӗсене мухтаса, вăл туйсем тăрăх пуянсемпе телейлисене савăнтарса ҫӳренӗ. Пӗр туйра вăл Магуль-Мегерине курнă, вӗсем вара пӗр-пӗрне юратса пăрахнă. Ăна качча илме Ашик-Керибӗн шанчăк сахал пулнă, ҫакна пула вăл хӗллехи пӗлӗт пек салхуланнă.

Пӗрре вăл садра виноград тӗмӗ айне выртнă та ҫывăрах кайнă. Ҫак вăхăтра Магуль-Мегери

хăйĕн тантăшĕсемпе сада тухнă, тантăшĕсенчен пĕри çывăракан ашике (балалайка калакана) курнă та, ыттисенчен каярах юлса, ун патне пынă. „Мĕн эсĕ виноград тĕмĕ айĕнче çывăратăн, тăр, айван, санăн чун савни пырать ав“,—тесе юрласа янă. Лешĕ вăраннă, хĕр, кайăк пек, вĕлт кăна çухалнă. Магуль-Мегери хĕр-юлташĕ юрланине илтнĕ те ăна ятлама пуçланă.—„Вăл юрра эпĕ камшăн юрланине пĕлсен, эсĕ мана тав тунă пулăттăн: вăл сан Ашик-Кериб“,—тенĕ ăна лешĕ.—„Илсе кай-ха мана ун патне“,—тенĕ Магуль-Мегери; вĕсем вара Ашик-Кериб патне пынĕ. Вăл хурлăхлă ларнине курсан, Магуль-Мегери ăна йăпатма тытăннă.—„Мĕнле хурланас мар манăн, эпĕ сана юрататăп, анчах эсĕ нихçан та манăн пулас çук“,—тенĕ ăна Ашик-Кериб.—„Аттерен мана качча пама ыйт, ман атте пирĕн туя хăй укçипех тăвĕ, иксĕмĕре мĕн кирлине пурне те парĕ“,—тенĕ Магуль-Мегери.—„Юрĕ,—тенĕ Ашик-Кериб,—чăнах та, Аяк-Ага[1] хăй хĕрĕшĕн нимĕн те хĕрхенес çук; анчах, кам пĕлет, санăн нимĕн те пулман, ман пурлăхпа пурăнатăн тесе ўпкелемĕн-и кайран? Çук, юратнă Магуль-Мегери, чунăмпа тупа турăм: çичĕ çул хушши тĕнче тăрăх çўрĕп, хама валли пуянлăх тупăп е пĕр-пĕр инçетри пушхирте пуçа хурăп; эсĕ çакăнпа килĕшетĕн пулсан, вăхăт çитсен—манăн пулăн“. Хĕр килĕшнĕ, анчах каланă кун килмесен, эпĕ Куршуд-бек[2] арăмĕ пулатăп, вăл тахçантанпах мана çураçать ĕнтĕ, тенĕ.

Ашик-Кериб хăй амăшĕ патне пынă; çула тухма унтан пил илнĕ, пĕчĕк йăмăкне чуптунă, хулпуççи урлă кутамкка çакнă та, çулçўрен туйине

[1] Ага тесе Турцире хуçана, начальнике хисеплесе чĕнеççĕ.
[2] Бек (бей)—князь.



илсе, Тифлис хулинчен тухса кайнӑ. Акӑ ӑна пӗр юланут хуса ҫитет; пӑхать вӑл: ку Куршуд-бек иккен. „Телейлӗ ҫул пултӑр!—тесе кӑшкӑрать ӑна бек.—Эсӗ, ҫулҫӳрен, кирек ӑҫта кайсан та, эпӗ санӑн юлташу пулӑп". Кӑмӑла килмест те Ашике ку юлташ, анчах нимӗн тума та ҫук. Нумайччен вӗсем пӗрле утнӑ, юлашкинчен юханшыв тӗл пулнӑ. Кӗпер те, ӑшӑх вырӑн та пулман. „Иш малтан, эпӗ сан хыҫҫӑн пырӑп",—тенӗ Куршуд-бек. Ашик тумтирне хывнӑ та шыва чӑмнӑ. Тепӗр енне ишсе каҫсан пӑхать—ах инкек! Эй, ырӑ Аллах!—Куршуд-бек ун тумтирне илсе, каялла Тифлиса кайнӑ; ун хыҫҫӑн таса хирте тусан кӑна ҫӗлен пек явӑнса юлнӑ. Тифлиса ҫитсен, вӑл Ашик-Кериб тумтирне унӑн ватӑ амӑшӗ патне йӑтса пынӑ. „Сан ывӑлу тарӑн юханшывра путса вилчӗ, акӑ унӑн тумтирӗсем",—тенӗ. Ҫав тери хуйхӑрнипе амӑшӗ ывӑлӗн тумтирӗ ҫине ӳксе, ӑна вӗри куҫҫулӗпе йӗпетнӗ; унтан вӑл ку тумтирсене пулас кинӗ патне, Магуль-Мегери патне илсе кайнӑ. „Ман ывӑл шыва путса вилнӗ, Куршуд-бек унӑн тумтирне илсе килчӗ, эсӗ ӗнтӗ ирӗклӗ",—тенӗ вӑл. Магуль-Мегери кулса янӑ та: „Ан ӗнен, ӑна йӑлтах Куршуд-бек шухӑшласа кӑларнӑ; ҫичӗ ҫул иртиччен никам та ман упӑшка пулас ҫук",—тенӗ. Вӑл стена ҫинчи саазне илнӗ те мӗскӗн Ашик-Керибӗн юратнӑ юррине юрлама пуҫланӑ.

Ҫак самантра ҫулҫӳрен ҫара уран, ҫарамас пӗр яла пырса кӗнӗ. Ырӑ ҫынсем ӑна тумлантарнӑ, тӑрантарнӑ; вӑл уншӑн вӗсене тӗлӗнмелле юрӑсем юрласа панӑ. Ҫапла вӑл ялтан яла, хуларан хулана ҫӳренӗ, ун мухтавӗ пур ҫӗре те сарӑлнӑ. Юлашкинчен, вӑл Халафа ҫитсе кӗнӗ. Яланхи пекех, кофе ӗҫмелли ҫурта кӗрсе сааз ыйтса илнӗ те юрлама пуҫланӑ. Ку вӑхӑтра Ха-



лафра паша[1] пуранна, вал юрлакансене пите юратна. Ун патне юрлакансене нумай иле-иле пына, анчах ăна пĕри те килĕшмен. Хула тăрăх чупа-чупа, ун тарçисем шалт ывăнса çитнĕ. Сасартăк, кофе ĕçмелли çурт умĕнчен иртнĕ чух, вĕсем тĕлĕнмелле сасă илтнĕ. Вĕсем унта чупса кĕнĕ. „Айта пирĕнпе аслă паша патне, унсăрăн пуçсăр тăрса юлăн",—тесе кăшкăрса янă вĕсем. „Эпĕ ирĕклĕ çын, Тифлис хулинчен килекен çулçӳрен,—тенĕ Ашик-Кериб.—Каяс килсен каяп, каяс килмесен—каймастăп; кăмăл пур чух юрлатăп, сирĕн паша маншăн начальник мар". Анчах ăна тытса, паша патне илсе кайнă. „Юрла",—тенĕ паша. Ашик вара юрласа янă. Ку юрăра вăл хăйĕн хаклă Магуль-Мегерине мухтаса юрланă. Мăнкăмăллă пашана ку юрă çав тери килĕшнĕ, чухăн Ашик-Керибе вăл хăй патне хăварнă. Акă унăн кĕсйине ылтăн та кĕмĕл юха пуçланă, çийĕнче пуян тумтир йăлтăртатса тăнă. Телейлĕ те савăнăçлă пурăнма тытăннă Ашик-Кериб, пите пуйса кайнă. Хăйĕн Магуль-Мегерине маннă-ши вăл, çук-ши, пĕлместĕп, анчах каланă вăхăт вĕçне çитсе пынă. Юлашки çул кĕçех пĕтмелле пулнă ĕнтĕ, вăл килне таврăнма хатĕрленмен те-ха. Хитре Магуль-Мегери хуйăха ӳкнĕ. Çав вăхăтра пĕр хуçа хĕрĕх тĕвеллĕ те сакăрвун тарçăллă караванпа Тифлисран тухса кайнă. Магуль-Мегери хуçана чĕнсе илнĕ те ăна ылтăн чашăк панă. „Илсем çак чашăка,—тенĕ вăл,—кирек хăш хулана пырсан та, эсĕ ăна лавккана кăларса ларт, пурне те пĕлтер, кам та кам çав чашăка хăй чашăкĕ тет, кам ăна йышăнать, чашăк чăнахах та хăйĕн иккенне ĕнентерме пултарать, çав çын çак чашăка илет, çине çак чашăк йывăрăш ылтăн

[1] Паша—авал Турцире начальниксене панă чи пысăк хисеплĕ ят.



илет, те“. Хуҫа тухса кайнӑ. Вӑл пур ҫӗрте те Магуль-Мегери каланине туса пынӑ, анчах ылтӑн чашӑка йышӑнакан никам та пулман. Ун таварӗ те сутӑнса пӗте пуҫланӑ, юлашки таварӗсемпе вӑл Халафа пынӑ. Магуль-Мегери каланӑ сӑмаха вӑл пур ҫӗре те пӗлтернӗ. Ҫакна илтсен, Ашик-Кериб караван сарайне чупса пынӑ та Тифлисран килнӗ хуҫа лавккинче ылтӑн чашӑка курнӑ. „Ку манӑн!“—тенӗ вӑл, чашӑка алла илсе. „Чӑнах санӑн,—тенӗ хуҫа.—Эпӗ сана палларӑм, эсӗ Ашик-Кериб. Вӗҫтер-ха хӑвӑртрах Тифлиса: санӑн Магуль-Мегери калама хушрӗ—срок тухать, каланӑ куна ҫитмесен, вӑл урӑх ҫынна качча каять“. Ашик-Кериб, шартах сиксе, пуҫне ярса тытнӑ: ҫак хӑрушӑ сехет ҫитесси виҫӗ кун ҫеҫ юлнӑ иккен. Ҫапах вӑл ут утланнӑ та, хӑйпе пӗр хутаҫ ылтӑн илсе, утне шеллемесӗр сиккипе кайнӑ. Юлашкинчен, ывӑнса ҫитнӗ ут Арзиньянпа Арзерум[1] хушшинчи Арзинган-ту ҫинче ӳксе вилнӗ. Мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ каччӑн? Арзиньянран Тифлиса ҫитме икӗ уйӑх каймалла, анчах унӑн икӗ кун кӑна юлнӑ. „Хӑватлӑ Аллах! Эсӗ мана пулӑшмасан, ҫӗр ҫинче ман урӑх нимӗн тума та ҫук!“—тенӗ вӑл. Ашик-Кериб ҫӳлӗ ту ҫинчен сикме тӑнӑ. Сасартӑк аялта шурӑ утпа пыракан ҫынна курса, унӑн хаяр сассине илтет: „Оглан (ачам), мӗн тӑвас тетӗн эсӗ?“—тесе ыйтнӑ вӑл унтан.—„Вилес тетӗп“,—тенӗ Ашик.—„Ан кунта, апла пулсан, сана хам вӗлерем“. Ашик ту ҫамкинчен аран-аран аннӑ. „Ут ман хыҫҫӑн“,—тенӗ юлан-утлӑ ҫын хаяр сасӑпа.—„Мӗнле сан хыҫҫӑн ӗлкӗрсе пырас ман, сан уту ҫил пек вӗҫет, мана йывӑр хутаҫ пусса тӑрать?“—тенӗ ӑна Ашик.—„Ҫапла ҫав; эппин, хутаҫне ман йӗнер ҫине ҫакса яр та

[1] Арзиньян таса Арзерум—Турцири хуласем.



ман хыҫран чуп“. Тем пек чупсан та, Ашик-Кериб юлнӑҫем юлнӑ.—„Мӗншӗн юлатӑн тата?“—тесе ыйтнӑ унтан юланутлӑ ҫын.—„Мӗнле ҫитсе пырас-ха ман сан хыҫран, сан уту шухӑшран та хытӑ каять, эпӗ шалт ывӑнтӑм ӗнтӗ“,—тенӗ Ашик.—„Ҫапла ҫав, ман ут ҫине хыҫа лар та йӑлт чӑннине каласа пар; ӑҫта каймалла санӑн?“—„Паян Арзерума та пулин ҫитесчӗ“,—тенӗ Ашик. „Хуп куҫна“. Вӑл куҫне хупнӑ. „Халӗ уҫ“. Пӑхать Ашик: ун умӗнче стенасем шуралса ларaҫҫӗ, Арзерум минаречӗсем йӑлтӑртатаҫҫӗ.—„Айӑплӑ, Ага,—тенӗ Ашик,—йӑнӑшрӑм; манӑн Карса каймалла тесшӗнччӗ эпӗ“.—„Ҫапла ҫав, каларӑм санӑ, мана йӑлт чӑннине каласа пар, терӗм; хупсам каллех куҫна. Халӗ уҫ“. Умра Карс иккенне Ашик пӑхса та ӗненмест. Вӑл чӗркуҫҫи ҫине ӳкет те ҫапла калать:—„Айӑплӑ, Ага, виҫӗ хут айӑплӑ санӑн тарҫу Ашик-Кериб; анчах, хӑвах пӗлетӗн, этем ирпе суйма тытӑнсан, унӑн каҫченех суяс пулать: манӑн чӑннипе Тифлиса ҫитмелле“.—„Эх, суеҫӗ!—тенӗ ҫиленсе юланутлӑ ҫын.—Нимӗн тума та ҫук, каҫарап сана. Хупсам куҫна. Халӗ уҫ“,—тенӗ вӑл пӗр минут иртсенех. Ашик савӑннипе кӑшкӑрса янӑ: вӗсем Тифлис хапхи умӗнчех тӑнӑ. Пӗтӗм чунтан тав туса, вӑл хӑй хутаҫне йӗнер ҫинчен илнӗ те юланутлӑ ҫын умӗнче ҫапла каланӑ: „Ага, санӑн ырӑ ӗҫӳ калама ҫук аслӑ, анчах тата тепӗр ырӑ ӗҫ ту маншӑн; Арзиньянран Тифлиса пӗр кун хушшинче ҫитнӗ тесен, мана никам та ӗненес ҫук; ҫавна ӗнентерме мӗн те пулсан пар мана“,—тенӗ Ашик-Кериб.—„Пӗшкӗн,—тенӗ лешӗ, кӑмӑллӑн кулса,—ут чӗрни айӗнчен пӗр катӑк ҫӗр ил те хӗвне чик; вара, сан сӑмах чӑн иккенне ӗненмесен, ҫичӗ ҫул суккӑр пурӑнакана чӗнсе пыртар та ун куҫне ҫакӑнпа сӗр—вӑл куракан пулӗ“. Ашик шурӑ ут чӗрни айӗнчен

пĕр катăк çĕр илнĕ; анчах пуçне çĕкленĕ çĕре юланутлă çын та, учĕ те пулман. Вара вăл хăйне ырă тунă çын, никам та мар, Хадерилиаз (св. Георгий) пулнине пĕтĕм чунтан ĕненнĕ.

Каç пулсан чылай вăхăтран тин Ашик-Кериб хăй пӳртне шыраса тупнă. Вăл чĕтрекен аллисемпе алăка шакканă. „Анне, анне, уç! Эпĕ турă хăни, шăннă та, выçă та; çухалса çӳрекен ывăлу ячĕпе ыйтатăп, кĕрт мана". Карчăкăн вăйсăр сасси ăна: „Çулçӳренсем валли пуянсемпе вăйлисен çурчĕ пур; халĕ хулара туйсем пур, унта эсĕ савăнса çĕр каçăн",—тенĕ.—„Анне, манăн кунта паллакан никам та çук, çавăнпа татах ыйтатăп: çухалса çӳрекен ывăлу ячĕпе кĕрт мана!" Хайхи унăн йăмăкĕ амăшне çапла каланă: „Анне, тăрам та уçса кĕртем ăна",—тенĕ.—„Пӳтсĕрскер! Эпĕ куççульпе курми пулса çичĕ çул пурăнатăп ĕнтĕ, эсĕ яшсене кĕртсе хăна тума хавас",—тенĕ карчăк. Анчах хĕрĕ, ун сăмахне пăхмасăрах, тăнă та Ашик-Керибе алăк уçса кĕртнĕ. Лешĕ ырă сунса ларнă та, хумханнине палăртас мар тесе, унта-кунта пăхкаланă. Стена çинче, тусан пуснă йĕнĕре, хăйĕн ырă саслă саазĕ çакăнса тănине курнă та амăшĕнчен çапла ыйтнă: „Мĕн çакăнса тăрать сирĕн стена çинче?"—тенĕ.—„Пурне те пĕлесшĕн эсĕ, хăна, пĕр татăк çăкăр парса, ыран кăларса ярсан та çитĕ сана",—тенĕ ăна амăшĕ.—„Эсĕ манăн тăван анне, ку—манăн йăмăк тесе каларăм сире, çавăнпа та стена çинче мĕн çакăнса тăнине каласа пама ыйтатăп",—тенĕ Ашик-Кериб.—„Сааз вăл, сааз",—тенĕ карчăк çиленсе, ăна ĕненмесĕр.—„Мĕн вăл сааз?"—„Сааз тени вăл—ăна каласа юрăсем юрлаççĕ тени пулать". Ашик-Кериб йăмăкĕ çав сааза илсе кăтарттăрччĕ тесе амăшне тархасланă. „Юрамасть. Ку сааз ман телейсĕр ывăлăн; вăл ĕнтĕ çичĕ çул стена çинче

çакăнса тăрать, никам алли те тĕкĕнсе курман ăна“,—тенĕ амăшĕ. Анчах йăмăкĕ пынă та стена çинчи сааза илсе панă ăна. Вара вăл, куçĕсемпе пĕлĕте тинкерсе, çакăн пек кĕлĕ пуçланă: „Эй, аслă Аллах! Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитес пулсан, манăн çичĕ хĕлĕхлĕ сааз халĕ те юлашки хут каланă чухнехи пекех янăравлă пултăр!“ Унăн пӳрнисем пăхăр хĕлĕхсене пăнтăртаттарса илнĕ те, хĕлĕхсем пĕр харăс янăраса кайнă; вăл юрлама тытăннă: „Эпĕ мĕскĕн Кериб (çулçӳрен), сăмахăмсем те ман мĕскĕн, анчах аслă Хадерилиаз мана чăнкă ту çинчен анма пулăшрĕ. Эпĕ мĕскĕн, сăмахăмсем те мĕскĕн пулсан та, палласа илсемччĕ, анне, хăвăн тухса кайнă ывăлна“. Кун хыççăн амăшĕ макăрса янă.—„Мĕн ятлă эсĕ?“—тесе ыйтнă вăл. „Рашид“ (уçă чун),—тенĕ лешĕ. „Пĕр хут кала, тепринче итле, Рашид,—тенĕ амăшĕ.—Сăмахусемпе эсĕ ман чĕрене татăкăн-татăкăн çуркаларăн. Иртнĕ каç тĕлĕкре эпĕ хам пуç çинче çӳç шуралса кайнине куртăм;—эпĕ куççульпе суккăр пулса ларни çичĕ çул çитет ĕнтĕ; каласам мана, ман ывăл сасси пек саслă этем, ман ывăлăм хăçан килет?“ Çак сăмаха вăл икĕ хутчен куççульпе каланă. Ашик-Кериб ăна хăй ывăлĕ тесе калани ахалех пулнă, амăшĕ ăна ĕненмен. Пăртак ларсан, Ашик-Кериб унтан çапла ыйтнă: „Сааза илсе кайма ирĕк пар, аннеçĕм, эпĕ кунта çывăхра туй пулать тенине илтрĕм: йăмăк мана ăсатса ярĕ; эпĕ юрлăп та сааз калăп, мĕн тупнине пурне те илсе килсе пĕрле уйăрăпăр“,—тенĕ. „Парса ямастăп, ывăл кайнăранпа та ку сааз килтен тухман“, — тенĕ карчăк. Анчах Ашик-Кериб пĕр хĕлĕхне те татмăп тесе тархаслама тытăннă.— „Пĕр хĕлĕхĕ татăлсан та, хамăн мĕнпур пурлăхăма парăп“,—тенĕ Ашик. Карчăк унăн хутаçне тытса пăхнă та, унта укçа нумаййине пĕлсе, саазне



парса янă. Йăмăкĕ ăна туй сикекен пуян çурчĕ тĕлне илсе çитернĕ те хăй, мĕн пулса иртнине курас тесе, алăк патне тăнă.

Ку çуртра Магуль-Мегери пурăннă, çак каç унăн Куршуд-бек арăмĕ пулмалла пулнă. Куршуд-бек тăванĕсемпе, хăйĕн тусĕсемпе ĕçсе çинĕ. Магуль-Мегери чаплă чатăр хыçĕнче тантăшĕсемпе пĕрле ларнă, пĕр аллине наркăмăшлă курка тытнă, тепĕр аллине çивчĕ кинжал илнĕ: вăл Куршуд-бек вырăнĕ çине выртиччен вилме сăмах панă. Чатăр хыçĕнчен палламан çын килнине илтет вăл: „Салам алейкум! Эсир кунта савăнатăр, ĕçсе çиетĕр, мана та, мĕскĕн çулçӳрене, хăвăрпа пĕрле ларма ирĕк памăр-ши; эпĕ сире юрăсем юрласа парăп“—тет Ашик-Кериб.— „Мĕншĕн юрамасть пултăр?—тенĕ Куршуд-бек.— Кунта юрлакансемпе ташлакансем килмелле, мĕншĕн тесен кунта туй; юрласа пар мĕн те пулсан, ашик (юрăсти), вара сана эпĕ пĕр ывăç ылтăн парса ярăп“,—тенĕ.

„Мĕн ятлă пулатăн эсĕ, çулçӳрен?“—тесе ыйтнă унтан Куршуд-бек.—„Шинди-гĕрурсез (кĕçех пĕлетĕр)“.—„Мĕнле ят вăл?—тесе кулса янă тĕлĕннипе лешĕ.—Эпĕ ун пек ята пуçласа илтетĕп“.—„Эпĕ варта чухне анне мана çуратаймасăр аптранă та, кӳршĕсем алăк умне пырса: турă ывăл пачĕ-и, хĕр пачĕ-и,—тесе ыйтнă; вĕсене анне: „шинди-гĕрурсез“, тенĕ. Çавăнпа та, эпĕ çуралсан, мана çавăн пек ят панă“. Кун хыççăн Ашик-Кериб сааз илнĕ те юрлама пуçланă:

„Халаф хулинче эпĕ мисир эрехĕ ĕçеттĕм, анчах турă мана çунат пачĕ те, виçĕ кун хушши вĕçсе, эпĕ çакăнта çитсе ӳкрĕм“.

Куршуд-бек пиччĕшĕ, айван этем, кинжал ярса илнĕ те кăшкăрса янă: „Суятăн эсĕ! Халаф-



ран кунта виҫӗ кун хушшинче епле ҫитме пулать?"—тенӗ.

„Мӗншӗн вӗлересшӗн-ха эсӗ мана? Юрӑстисем пур енчен те пӗр ҫӗре пухӑнаҫҫӗ; эпӗ сирӗнтен нимӗн те илместӗп—мана ӗненсен те, ӗненмесен те",—тенӗ Ашик.

„Юрлатӑрах",—тенӗ упӑшка пуласси, Ашик-Кериб вара каллех юрлама пуҫланӑ.

„Арзиньян улӑхӗнче ирхи намаз турӑм эпӗ, Арзерумра кӑнтӑрлахи намаз турӑм, хӗвел анас умӗн Карс хулинче намаз турӑм, каҫхи намаза Тифлисра турӑм. Аллах мана ҫунат пачӗ, эпӗ вара кунта вӗҫсе килтӗм; тур патӑрах мана шурӑ ут парни пулма, вӑл, кантра ҫинче ташлакан пек, ту тӳпинчен ту хушшине, ту хушшинчен ту тӳпине сике-сике, пит хӑвӑрт килчӗ: Мевлян (пирӗн турӑ) Ашике ҫунат пачӗ, вӑл Магуль-Мегери туйне вӗҫсе килчӗ."

Вара Магуль-Мегери, ун сассине палласа илсе, наркӑмӑшне пӗр енне, кинжалне тепӗр енне ывӑтнӑ. „Эсӗ ху тупа тунине ҫапла тытатӑн-и?—тенӗ ӑна тантӑшӗ.—Апла, паян каҫхине эсӗ Куршуд-бек арӑмӗ пулас тетӗн-и?"—„Эсир уйӑрса илеймерӗр эпӗ юратнӑ ҫын сассине",—тенӗ те Магуль-Мегери, хачӑ илсе, чатӑра касса ҫурнӑ. Ашик-Керибе лайӑхах палласа илсен, вӑл ҫухӑрса янӑ та унӑн мӑйӗнчен пырса уртӑннӑ, вара иккӗшӗ те тӑн ҫухатса ҫӗре ӳкнӗ. Куршуд-бек пиччӗшӗ, иккӗшне те чиксе вӗлерес тесе, вӗсем ҫине сиксе ӳкнӗ, анчах Куршуд-бек ӑна чарнӑ:

„Чарӑн, пӗл: этем ҫамки ҫине ҫуралнӑ чух мӗн ҫырнӑ, вӑл унтан иртеймӗ",—тесе хушса хунӑ вӑл.

Тӑна кӗрсен, Магуль-Мегери намӑсланса хӗрелнӗ те, питне аллипе хупласа, чатӑр хыҫне пытаннӑ.

„Халĕ эсĕ Ашик-Кериб пулни пурне те паллă, анчах кала-ха, çак аслă çула кĕске вăхăтра эсĕ мĕнле тухма пултартăн?“—тенĕ упăшка пуласси.—„Калана сăмах чăннишĕн ман хĕç чула касса татать; эпĕ суятăп пулсан, манăн мăй çак хĕçшĕн çÿçрен те çинçе пултăр. Анчах, илсе килĕр-ха кунта çичĕ çул кун çути курман суккăра, эпĕ ăна куракан тăватăп“,—тенĕ Ашик-Кериб. Алăк умĕнче тăракан Ашик-Кериб йăмăкĕ, çак сăмахсене илтсе, амăшĕ патне чупнă. „Анне!—тесе кăшкăрса янă вăл.—Вăл чăнах манăн пичче, вăл чăнах сан ывăлу, Ашик-Кериб!“—тенĕ те хăй çавăнтах карчăка туй ĕçкине çавăтса кайнă. Хайхи Ашик хĕвĕнчен тăпра кăларнă та ăна шывпа йĕпетнĕ, унтан: „Пĕлĕр, этемсем, Хадерилиаз мĕнле хăватлă та аслă пулнине“,—тесе амăшĕн куçне сĕрнĕ, вара амăшĕн куçĕсем куракан пулнă. Кун хыççăн никам та ун сăмахĕсене ĕненмесĕр иккĕленсе тăма хăяйман. Куршуд-бек та ăна хитре Магуль-Мегерине пĕр сăмахсăрах панă.

Ашик-Кериб савăннипе: „Итле-ха, Куршуд-бек, эпĕ санăн хуйхуна пусарам: ман йăмăк санăн малтан пулас арăмунтан кая мар; эпĕ пуян, унăн ылтăн-кĕмĕл сахал пулас çук; качча ил те ăна, эпĕ хамăн хаклă Магуль-Мегерипе мĕнле телейлĕ, çавăн пекех телейлĕ пулăр“,—тенĕ.

